Ку-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
15
ЮНКУН
184(6421) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ĕç тухăçлăхне ÿстермелли паха меслет

Совет халăхĕ Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерÿсемпе тулли кăмăлпа савăнса мухтанать. Мухтама тивĕçлĕ! Хĕрлĕ Çар гатакла çапăçусене хатĕрленнĕ вăхăтра пирĕн [illegible] çĕнтерÿ тума мĕн кирлине ытлан-çитлен туса кăларассишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешрĕç. Халĕ, Хĕрлĕ Çар тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе малалла тапăнса пынă чухне, тыла—Совет Союзĕн пур кĕтесĕсене те фронта вăрçă техники, хĕçпăшалсем, апат-çимĕçсем ытларах та ытларах парассишĕн кĕрешÿ çĕнĕ вăйпа сарăлса, ÿссе пырать.

Промышленность работникĕсем чĕртавăрсем, электроэнерги, топливо сахалтарах пĕтерсе лайăх пахалăхлă продукци ытларах туса кăларма çĕнĕ меслет шырса тупаççĕ. Предприятисенче хальпроизводствăна поточнăй методпа организацилени сарăлса пырать. Промышленность работникĕсем производствăна поточнăй методпа организациленин—технологи дисциплинине çирĕплетмелли, производство культурине çĕклемелли, продукци туса кăларассине ÿстермелли паха меслет пулса тăнине курса тăраççĕ. Предприятисенче малтанхи опытсем те çавна уçăмлăн çирĕплетсе параççĕ.

Канашри вагонсем юсакан заводра хăшпĕр цехсенче производствăна поточнăй методпа организациленĕ. Çакă вăл малтанхи кунсенчех заводра ĕç тухăçлăхне ÿстермелли пысăк резервсем пуррине кăтартса пачĕ. Пĕр цехра поточнăй методпа ĕçлеме тытăнсан ĕç тухăçлăхĕ 15 процент таран ÿснĕ. Поточнăй методпа, конвейерпа ĕçлеме тытăннă хыççăн цехсене те ĕçтухăçлăхĕ чылай ÿснине куратпăр. Халĕ заводри пур цехсенче те производствăна çĕнĕ методсемпе организацилес тĕлĕшпе плансем, схемăсем тăваççĕ.

Акă тата Челноков юлташ ертсе пыракан заводра [illegible] поточнăй методпа ĕçлеме тытăннă. Çавăн хыççăн ăна производствăна ĕçлесе кăларассине хăвăртлатса ÿстерме пултарнă. Унта пĕр технологи процесне тытса тăракан [illegible] поточнăй метод ĕçтухăçлăхне ÿстерме паха меслет пулса тăнине уçăмлăн кăтартса параççĕ.

Поточнăй методпа ĕçлессисенче вăл станоксемпе машинăсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса йĕркелесе лартассине кăна пĕлтермест. Поточнăй методăн пĕлтерĕшĕ ĕçтухăçлăхне çĕклессинче пулать. Ĕçтухăçлăхĕ ÿсмест пулсан, поток тата конвейер никамăн та кирлĕ мар. Поточнăй метод чăннипех ĕçтухăçлăхне ÿстерме паха меслет пулса тăтăр тесен ăна тĕплĕн шутласа, пĕтĕм условисене висе организацилени кирлĕ. Чи малтан пах производство технологине çĕнĕлле йĕркелес пулать, инструментсем ситеклĕ пулмалла.

Производствăна çĕнĕ методпа организацилени хыççăн завод е фабрика кăна мар, кашни цех, кашни рабочи хăйĕн планне тултарса пыма тивĕçлĕ. Пĕр рабочи плана тултарманни пĕтĕм конвейра кая хăварма пултарать. Партипе профсоюз организацийĕсен çавна яланах асра тытмалла. Çĕнĕ методсемпе ĕçлеме тытăннă чухне рабочисене те техникăна [illegible] вĕрентмелле. Кашни рабочи хăйĕн станокне культурăллă тытса ĕçлеме пултармалла, нормăна яланах ирттерсе тултармалла.

Поточнăй методпа, конвейерпа ĕçлеме тытăнни рабочисемпе инженерла-техника работникĕсен пуçарулăхне, техникăлла шухăшĕсене аталантарма май парать. Поточнăй метод хăш участок тата кам кая юлса пынине кăтартса парать. Ун чухне вара рабочисен пуçарулăхне, вĕсен техникăлла шухăшĕсене çав ситменлĕхсене пĕтерме майсем шырса тупма çĕре, пĕтĕм коллектив ĕçне лайăхлатма çĕре мобилизацилемелле.

Халĕ, фронт интересĕсем социализмла промышленность умне производства кăларассине хăвăртлатас задачăсене лартнă. Предприятисенче [illegible] поточнăй методпа паха майсемпе ĕçлекен предприятисем тулли ÿсĕмсем кăтартчăр. Предприяти руководителĕсем тата партипе совет организацийĕсем çине тăрса ĕçлесе, ĕçтухăçлăхне ÿстерме поточнăй методпа ĕçлеме ăнăçлăн тума пултараççĕ.

Питех те пысăк пулăшу

Комсомолецсемпе çамрăксен государствăна тырă парас тĕлĕшпе пулса иртнĕ воскресникĕн итогĕсем

Сентябрĕн 12-мĕшĕнче государствăна тырă леçес тĕлĕшпе республикăри комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ пулса иртрĕ.

Воскресник ăнăçлăн иртрĕ. Комсомолецсемпе çамрăксем, хатĕрлев пунктне тырă тиесе ăсатас, тырра пунктсене турттарса кайса, ĕçре активлăн хутшăнчĕç. Воскресник участникĕсем тырă турттарнă çĕрте [illegible] организацийĕсене пулăшрĕç. Çав кун государствăна пĕтĕмпе 45.506 центнер тырă тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене леçсе панă.

Воскресник чылай районсенче пысăк ăнăçлăхпа пулса иртрĕ. Шăхасан районĕнчи колхозсем хатĕрлев пункчĕсене 3.858 центнер, Вăрмар районĕнчи колхозсем—2.700 центнер, Чкаловски районри колхозсем—2.626 центнер, Ишлей районĕнчи колхозсем—2553 центнер, Комсомольски районĕнчи колхозсем—2.544 центнер, Калинински районри колхозсем—2.400 центнер, Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем—2380 центнер тата Советски районри колхозсем—2.300 центнер леçрĕç. Çавăн пекех Элĕк, Шăмăршă, Красноармейски районсенчи комсомолецсемпе çамрăксем те пысăк ĕç туса ирттерчĕç.

Кунта пĕрлех çакна та палăртмалла: Çĕмĕрле, Первомайски, Улатăр, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай тата Етĕрне районĕсенчи комсомол организацийĕсем воскресник ирттересси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмарĕç. Çавна пула вĕсен ĕçĕ те начар пулчĕ.

Воскресника хутшăннă çĕршер комсомолецсемпе çамрăксем тăван çарăмпа фронта пулăшас ĕçре [illegible] республикăри комсомол организацийĕсем [illegible].

Ку ĕçе малашне те пĕр чарăнмасăр туса пырас пулать. Государствăна тырă хăвăртрах парса татас тесе, Ишлей районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем çитес вырсарникун, сентябрĕн 19-мĕшĕнче, татах тепĕр воскресник ирттерме шутлаççĕ. Çакна ырламалла. Комсомолецсемпе çамрăксен пуçарăвĕпе организациленĕ хĕрлĕ обозсен хисепĕ кунсеренех ÿссе пытăр!

Л. МИХАЙЛОВ,
ВЛКСМ Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Фронтовиксен çемьисемпе шкул ачисем валли

ОКТЯБРЬСКОЕ, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Чапаев ячĕпе тăракан колхозра фронтовиксен çемьисемпе шкул ачисем валли ăшă япаласем çыхма 5 килограмм çурă, „Комсомолец“ колхозри çамрăксем —4 килограмм çăм пухнă.

Районра чылай çĕрте хĕрлĕ улахсем организациленĕ. Унта шкул ачисем валли ăшă япаласем хатĕрлеççĕ. „Красный труженик“ колхозри хĕрлĕ улаха Мария Яковлева ертсе пырать. Кунта çамрăксемпе пĕрле вата колхозницăсем пухăнаççĕ. 63 çулхи колхозница П. Павлова (унăн икĕ ывăлĕ фронтра) пĕр каçра çур килограмм çăм арлана, П. Кузьмина хĕрачи 5 мăшăр çăм носки çыхнă. Вĕсен примерне „13 лет Октября“ колхозри комсомолецсем те йышăнса илнĕ.

А. Иванов.

Кĕрхи тырăсем тикĕс шăтса тухрĕç

ШАХАСАН. Калинин ячĕпе тăракан колхоз кăçал кĕрхи тырăсене районра чи малтан акса пĕтерчĕ. Колхозниксем хăйсен ĕçне тăрăшса туса пычĕç, ĕçĕн пахалăхĕшĕн тимлĕн кĕрешрĕç. Тăрăшса ĕçлени вырăнлă пулчĕ, кĕрхи тырăсем тикĕс шăтса тухрĕç.

Ку колхозра кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ. Халĕ вĕсем çине тăрсах авăн çапаççĕ.

С. АСЛАН

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем СТАЛИНО хулинчен (Донбасс) хĕвеланăçнерехре çаплах малалла тапăнса пынă, 6 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 90 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Сталино облаçĕнчи АСЛĂ ЯНИСОЛЬ ятлă район центрне тата КОМАРЬ, ВЫРЕМЬЕВКА, НОВОДАРОВКА, САНЖАРОВСКИЙ, ВОРОШИЛОВКА, ЗАСАФЬЕВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

НЕЖИН хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 17 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Чернигов облаçĕнчи КОМАРОВКА ятлă район центрне, ВОЛОВИЦА, СТЕПАНОВКА, БРИТАНЫ, ЕВЛАШОВКА, БУРКОВКА, ПЕЧИ, КĔÇĔН САМБУР, АСЛĂ САМБУР, ТИНИЦА, ГОЛЕНКИ, ГАЙВОРОН, ДЕПТОВКА, КОШАРЫ, ГАЛКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата КРУТЫ, ВАРВАРОВКИЙ ятлă чугун çул станцийĕсене илнĕ.

ПРИЛУКИ хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 140 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ХМЕЛЕВ, КОРОВНИЦЫ, ГЕРАСИМОВКА, БОБРИК, РУЧКИ, КРУТЬКИ, ХАРЬКОВСКИЙ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата АНДРИЯШЕВКА, ЮСКОВЦЫ ятлă чугун çул станцийĕсене илнĕ.

РОСЛАВЛЬ хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, 4 километртан пуçласа 6 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ.

БРЯНСК енче пирĕн çарсем çаплах малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ИВОТ, ЦЕМЕНТНЫЙ, КРЫЛОВКА, САМАРА-РАДИЦА, АСЛĂ ПОЛПИНО ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене, çавăн пекех тата БЕЛОБЕРЕЖСКАЯ, СНЕЖИТЬСКАЯ, СВЕНЬ ятлă чугун çул станцийĕсене тата Десна шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче 1-МĔШ БРЯНСКПА 2-МĔШ БРЯНСК чугун çул узелĕсене илнĕ. Çапла ĕнтĕ, пирĕн çарсем Брянск хули патнех пырса çитнĕ.

Сентябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 14 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 18 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Сталино хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Тăшман вăйлă персе хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса тата вăл минăсем лартса тултарнă вырăнсем урлă каçа-каça, пĕр соединени боецĕсем халăх пурăнакан темиçе вунă пункта тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1500 çынна çити пĕтерсе тăкнă. 4 танк, 7 бронетранспортер, 13 тупă, 96 пулемет тата боеприпассем тиенĕ автомашинăсене нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра советсен моторизованнăй тата кавалери чаçĕсем тăшманăн аркатса тăкнă чаçĕсене çаплах хăваласа пынă. Иртнĕ кун хушшинче пирĕн кавалеристсемпе мотопехота гитлеровецсен пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайнă темиçе вунă ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Нежин хули енче пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла, вăл шутра Чернигов облаçĕнчи Комаровка ятлă район центрне, тытса илнĕ.

Бахмач хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем нимĕçсен тăватă пехотнăй дивизийĕн юлашкийĕсене çавăрса илнĕ те пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Чылай гитлеровеца тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем Круты ятлă чугун çул станцине вăркăнса кĕрсе кайнă та ăна тытса илнĕ. Пирĕн боецсем çав тери хăвăрттăн пырса çапнипе нимĕçсен çав станцие пырса çитнĕ подкреплениĕсем вагонсенчен анма та ĕлкĕреймен. Вагонсенчи гитлеровецсен пысăк пайне пĕтерсе тăкнă, юлашкисене тыткăна илнĕ.

* * *

Прилуки хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 140 пункта ытла тытса илнĕ. Тăшман, совет чаçĕсем малалла тапăнса пынине пăтраштарса яма хăтланса, фронтăн пĕр ансăр участокĕнче хăйĕн пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсене контратакăна кĕртсе янă. Пирĕн боецсем нимĕçсене пур тĕслĕ хĕçпăшалпа та пеме тытăннă, вĕсен 12 танкне пĕтерсе тăкнă тата темиçе çĕр салтакпа офицера вĕлерсе пĕтернĕ, вара тăшманăн каялла чакма лекнĕ. Çав çапăçура тупă наводчикĕ Краснов красноармеец нимĕçсен 3 танкне (вăл шутра пĕр танкĕ „тигр“ йышши йывăр танк) пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем 6 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 4 тупă тата 13 хир туппи тытса илнĕ.

* * *

Брянск енче пирĕн çарсем çаплах малалла ăнăçлăн тапăнса пынă. Тăшман шыв рубежĕсемпе тата сĕм вăрман талккишĕнче лартса тултарнă инженерла чăрмавсемпе усă курса хаяррăн хирĕç тăнă, анчах та пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсен оборонине татнă та хăвăрттăн малалла куçма пуçланă. Вара вĕсем часах Фокин ячĕпе тăракан поселока вăркăнса кĕрсе кайнă, ăна тытса илнĕ. Совет боецĕсем тăшмана сывлăш çавăр малăх вăхăт та паман, çавăнтах гатăклă атака пуçласа ярса, вăйлă çирĕплетнĕ 2-мĕш Брянск чугун çул узелне тытса илнĕ. Çав вăхăтрах пирĕн ытти соединенисем нимĕçсене Урицкий ячĕпе, Володарский ячĕпе, Лев Толстой ячĕпе тăракан поселоксенчен хăваласа кăларнă та 1-мĕш Брянск чугунçул узелне тытса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен 2000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Харьковран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçнă, халăх пурăнакан 2 пункта тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити пĕтерсе тăкнă. 3 тупă, 20 пулемет тата боеприпассен 2 складне тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ нимĕçсен 6000 тонна водоизмещениллĕ транспортне тата çавăн пекех тăшманăн хуралта çÿрекен пĕр карапне шыва путарнă.

Пирĕн летчиксем Азов тинĕсĕнче тăшманăн 2 торпеднăй катерне тата десант антармалли 2 баржине шыва путарнă.

* * *

Белоруссири партизансен отрячĕсем юлашки 5 кун хушшинче тăшманăн çулйĕрĕсене темиçе хутчен те пыра-пыра çапнă. Вĕсем нимĕçсен 75 поездне ÿпĕнтерсе янă. Çав поездсенчен нумайĕшĕ фронт линийĕ патнелле икшер паровозпа пынă. Крушенисенче 100 паровоза çити тата 1000 вагонпа платформа ытла çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ е сиенленнĕ. Çав вăхăт хушшинчех совет патриочĕсем 160 автомашина пĕтерсе тăкнă, 4 пысăк склад çунтарса янă, чугун çул çинчи пĕр кĕпере тата шоссе çулĕ çинчи 38 кĕпере сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 15-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 81-мĕш полкăн 2-мĕш батальонĕнчи вĕлернĕ салтакăн Альфред Зейделĕн сумкинче ун патне унăн Саар облаçĕнче пурăнакан амăшĕ августăн 21-мĕшĕнче янă çырăва тупнă. Унта çапла каланă: „Кунта тотальнăй мобилизаци тăрăх юлашки уксах-чăлахсене те илсе кайрĕç... Нивушлĕ çав ниме юрăхсăр çынсем фронта тытса тăма пултарĕç-ши вара? Сирĕн унта каллех вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Ăçтан тупаççĕ вара вырăссем çавăн чухлĕ танкпа самолет? Пирĕн сволкăсене ĕненес пулсан, вырăссен ĕнтĕ тахçанах пĕр танк та, пĕр самолет та пулмалла мар“.



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Нимĕçсемпе хĕрсе çапăçнă вăхăтра оруди расчечĕн командирĕ старши сержант **А. А. Ананьев** пĕччен тăрса юлнă, анчах вăл пеме чарăнман, персе тата 70 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

Чăваш халăхĕн çав паттăр ывăлне командовани Хĕрлĕ Ялав тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе тата «За боевые заслуги» медальпе наградăланă.

Ÿкерчĕк çинче: Тупă расчечĕ тăшмана тÿррĕн тĕллесе перет. Сулахайра — старши сержант **А. А. Ананьев.**

Я. ПАВОЛОЦКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлессишĕн

ИШЛЕЙ, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Донбасс шахтисене пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларни çинчен калакан хыпара итленĕ хыççăн районри колхозсенче колхозниксен митингĕсем пулса иртрĕç. Митингсенче Сталин юлташăн приказне вуласа пачĕç. Митинг хыççăнах «Агроном» колхоз хатĕрлев пунктне 18 лав тырă леçрĕ. Государствăна 1944 çулшăн 700 килограмм аш-какай пачĕ. «Красный танк» колхоз членĕсем кăнтăрла та, çĕрле те уйăх çутипе уйхиртен кĕлте кÿме тытăнчĕç. Колхозниксем кĕлтесене алăпа та йăтаççĕ, лашасемпе те турттараççĕ. Ку ĕçе колхоз председателĕ Олангин юлташ хăй ертсе пырать, колхозниксемпе çĕрле хăй те кĕлте йăтать, ĕç нормине 125 процент тултарать.

Жданов ячĕпе хисепленекен колхозра митинг хыççăн ĕçре çĕнĕ хавхалану пуçланчĕ. Колхоз сентябрĕн 12-мĕшĕнче государствăна тырă памалли 1943 çулхи обязательствăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕ, кĕлтесене капана хывса пĕтерчĕ. Войков ячĕпе тăракан колхозра çĕрĕн-кунĕннех авăн çапаççĕ. Машинист Г. Волков юлташ ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Талăкра 3,5 тонна тырă çапса кăлармалла пулсан, унăн молотилки 4,5 тонна çапса кăларать.

В. ГУСЬКОВ.

„Красный часовой“ колхозра

ЕЛЧĔК, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). „Красный часовой“ колхоз членĕсем, Хĕрлĕ Çар фронтра пысăк çĕнтерÿ туса пыни çине ответлесе, кĕлте кÿрсе капана хывас тĕлĕшпе сентябрĕн 12-мĕшĕнче воскресник туса ирттерчĕç. Ирхине ирех уйхире 180 колхозник тухрĕ. Вĕсем кун каçах кĕлте йăтса капан турĕç. Каç пулнă çĕре 120 гектар çинчи тырра капана хывса лартрĕç.

Воскресникре хăшпĕр колхозниксем питĕ те вирлĕн ĕçлерĕç. Мария Гурьевăпа Клавдия Бычкова çамрăк колхозницăсем улăм йăтмалли носилкăпа иккĕн 26 çĕмел йăтнă. Вера Перлова, Лида Николаева, Лариса Краснова, Мария Гурьева пионеркăсем капан патне кашни вуншар çĕмел таран кĕлте йăтма пултарнă.

Фронтовик ашшĕ—73 çула çитнĕ ватă колхозник И. Трифонов юлташ вăл кун хăй пĕччен 8 капан тунă, 85 урапа кĕлтене капана вырнаçтарса хунă. И. Павлов колхозник 9 капан тунă, кашни капанне вуншар урапа кĕлте кĕртнĕ. Отечественнăй вăрçă инваличĕ Чанаев юлташ кунĕпех капан çине кĕлте пана. Чанаев юлташ вăл кун 90 урапа кĕлте панă.

„Красный часовой“ колхоз членĕсен патриотла туйăмĕ пысăк. Вĕсем фронтри çĕнтерÿсемпе хавхаланса ĕçлеççĕ, фронтпа тăван çĕршыва ĕçпе пысăк пулăшу параççĕ.

С. МАКАРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Сводка тăрăх уборка пĕтнĕ...

КАНАШ. (Хамăр корр.). Ачча ялсоветĕнчи «Хĕрлĕ Çар» колхоз районра пысăк колхозсенчен пĕри. Çак колхозăн кăçалхи çул 503 гектар çинчен тырпул пухса кĕртмелле. План тăрăх вăл тырпула 14 кун хушшинче вырса пĕтерме палăртнă. Колхоз председателĕ М. Малицкая юлташ сентябрĕн 10-мĕшĕнче райçĕрĕç пайне колхоз пур йышши культурăсене те вырса пĕтернĕ тесе пĕлтернĕ. Тĕрĕссипе илсен, çак колхозăн 30 гектар çуртырри вырмасăр юлнă. Вăл шутран 3-мĕш бригадăра (бригадирĕ Порфирьев) 10 гектар.

Уборка пуçланнăранпах «Хĕрлĕ Çар» колхозра ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ Н. Айдарова юлташ парти райкомĕн уполномоченнăйĕ пулса ĕçлет. Вăл çÿлерех кăтартнă ĕç çинчен аван пĕлсе тăрать пулин те, нимĕн шарламасăр ирттерсе ярать. Райçĕрĕç пайĕ те «Хĕрлĕ Çар» колхоза уборка пĕтернĕ тесе шутлать.

Эпир ку колхоза кăнтăрла умĕн çитрĕмĕр. Ирхине пăртак çумăр пĕрĕхсе тăнă пирки çав кун кăнтăрлаччен пĕр бригада та ĕçлеме тухман.

— Уборкăна вăхăтра пĕтерме çанталăк кансĕрлерĕ,—тет Малицкая юлташ. Анчах ĕç пĕрре те çанталăкра мар. Малтанах калас пулать: кунта ĕç дисциплини калама çук сÿрĕк. А. Лазарева ертсе пыракан бригадăра сентябрĕн 10-мĕшĕнче 5 колхозница пĕр сăлтавсăр ĕçе тухман. Çакнашкалах ытти бригадăсенче те кашни кун тенĕ пекех 3—4 çын ĕçе тухмаççĕ. Е. Кожевникова колхозница виçĕ кун хушши ĕçе тухман. Хĕрÿллĕ ĕç вăхăтĕнче кунта пĕрле апатланмалли столовăйпа ачасен ясли йĕркеллĕ ĕçлемен. Çавăнпа та хăш пĕр çамрăк ачаллă колхозницăсем ĕçе вăхăтра тухманни те пулнă.

Транспорт инвентарĕсем çителĕксĕр пирки кĕлте кÿрес ĕç юлса пырать, 24 лаша валли урапасем çук. Авăн çапассине государствăна тырă парас ĕçсем те начар пулса пыраççĕ. Правлени нарядĕ тăрăх сентябрĕн 11-мĕшĕнче тырăпа кашни бригадăран виçшер лав ямалла пулнă пулсан, ку ĕçе икĕ бригада çеç пурнăçланă. Колхоз председателĕ Малицкая юлташ шучĕпе колхозра пур ĕçсем те тип-тикĕс пулса пыраççĕ. Ĕçсем начар пыни çинчен тапратсан вăл:

— Манăн хăлха вăл ыйтусене хăнăхса çитрĕ ĕнтĕ. Пур килекен уполномоченнăй калани итлесен, кунта канма та вăхăт тупаймăн,— тет.

Чăнахах та çапла. Вăл ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн решенийĕсене нихăçан та вăхăтра пурнăçламасть. Ахальтен мар ĕнтĕ «Хĕрлĕ Çар» колхоз, иртнĕ çулсенче районра малта пыракан колхозсен ретĕнче тăнăскер, кăçал кая юлнă.

Ф МАЛЫШКИН.

Пахча-çимĕç сутса 300 пин тупаш тунă

ИШЛЕЙ. Катраç ялсоветĕнчи «Хĕрлĕ Яуш» колхоз кăçал пахча-çимĕç нумай акса ÿстерчĕ. Пахча-çимĕç бригади хăйне шанса панă ĕçе тимлĕн туса пычĕ. Бригадăна ватă колхозник Михаил Алексеевич Денисов юлташ ертсе пырать. 1942 çулта Денисов юлташ пахча-çимĕç ÿстерес ĕçре тунă çитĕнÿсемпе районри ялхуçалăх выставкинче диплом илме тивĕçлĕ пулчĕ. Кăçал вăл пахча-çимĕçе лайăх ÿстерсе колхоза çĕнĕрен 350 пин тенкĕ тупăш туса пама пулчĕ. Çакă халь ĕнтĕ пурнăçланса пырать. Колхоз государствăна тĕрлĕрен пахча-çимĕç памалли обязательствăсене сентябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех парса татрĕ. Çакăн хыççăн колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх памалли виçерен юлнă пахча-çимĕçе сутса, колхоз 300 пин тенкĕ тупăш турĕ. Çапла, пахча-çимĕç бригади тимлĕн ĕçлени колхозăн пурлăхĕпе пуянлăхне ÿстерме вăйлăн пулăшать.

М. ЩЕРБАНОВА.

Çĕрулми кăлараççĕ

ЭЛĔК, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Качалаври «Труд» колхозра кашни кун 25 колхозник колхозăн уйри çĕрулмине кăларма тытăнчĕç. Пĕр кун хушшинче вĕсем пĕр гектар çĕрулми кăларса пĕтерчĕç.

Эпир тăван çĕршыва аш-какай, сĕт-çу, çăм, тир-сăран мĕн чухле ытларах паратпăр, пирĕн Хĕрлĕ Çар та çавăн чухлĕ вăйлăрах пулать

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ выльăх-чĕрлĕх тата лашасем ĕрчетес тĕлĕшпе районсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртăвăн ĕçĕсене ултă уйăхри итогĕсене пăхса тухса Элĕк районĕ мала тухнине палăртрĕç. Элĕк районĕнчи колхозсенче кăçал çуркунне лашасен хисепĕ 5,5 процент, ĕне-выльăхсен йышĕ — 19,9 процент, сыснасен йышĕ — 28,7 процент, сурăхсен йышĕ — 35,8 процент чухлĕ ӳсрĕ. Ку район çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли плана та ăнăçлă тултарса пырать.

Çак ĕçтешĕсене кура Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава Ишлей районĕнчен илсе Элĕк районне памалла тунă.

Çак кунсенче Элĕкре ВКП(б) Обкомĕпе ЧАССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ ятпа выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен тата партипе совет районри активĕн канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлура тухса каласкансем кашниех Хĕрлĕ ялава алăра çирĕп тытса тăма пулса вăл шеллемесĕр ĕçлеме сăмах пачĕç.

Элĕксен обязательстви çапла: выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне кашни колхозăн пур выльăхсем енĕпе те октябрĕн 1-мĕшĕччен тултармалла;

выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ суртпĕрсене юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕçсене октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле;

кашни сумалли ĕнерен вăтам шутпа кăçал 1.200 литр сĕт, кашни сурăхран 2,5 килограмм çăм, кашни 100 сурăхран 115 путек тата кашни ама сыснаран 12 çăвăр илмелле;

кашни колхозăннах çителĕклĕ таран лайăх пахалăхлă выльăх апачĕсем хатĕрлемелле;

ялхуçалăх ĕçĕнче усă курма кашни колхозрах çитес 2 — 3 уйăх хушшинче вăкăрсене кӳлсе çӳреме вĕрентсе хатĕрлемелле;

государство умĕнчи обязательствăсене кашни колхозăн аш-какай енĕпе октябрĕн 1-мĕшĕччен, сĕт-çу — октябрĕн 20-мĕшĕччен, çăмăн та — октябрĕн 1-мĕшĕччен тата çăм сентябрĕн 20-мĕшĕччен парса татмалла.

Острецово колхозникĕсен пуçарăвне ырласа, нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă колхозсене пулăшас тĕлĕшпе сентябрĕн 20-мĕшĕччен ĕне выльăхсем 50 пуç, сыснасем — 100 пуç, сурăхсем 80 пуç памалла, çавăн пекех „тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен сывлăхне сыхламалли фонда" ялхуçалăх продукчĕсем парас ĕçе сарса ямалла.

Паянхи хăçатра эпир Элĕк районĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен тата партипе совет активĕн канашлăвĕнче тухса каласа уйрăм юлташсен сăмахĕсене пичетлетпĕр.

Пирĕн ĕçĕн хăшпĕр итогĕсемпе малашнехи задачăсем

(М. Федотов—ВКП(б) райкомĕн секретарĕ)

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура пирĕн республика иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн Оборона Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме пултарчĕ, çав ăмăртура пирĕн Элĕк районĕ те Союзри виççĕмĕш премие илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Çак пысăк награда пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсене татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Чăннипех те, кăçал эпир начар мар ĕçлетпĕр. Акă пирĕн хăшпĕр тĕслĕхсем: кăçалхи 6 уйăх хушшинче пирĕн районри общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана: ĕне-выльăхсем енĕпе — 105,5 процент, лашасем енĕпе—104,5 процент, сурăхсем енĕпе—149,5 процент, сыснасем енĕпе—123,6 процент тултарнă. Чăх-чĕпсем, пыл хурчĕ ĕрчетес тĕлĕшпе те эпир плана иртерсе пурнăçларăмăр. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе уйрăмах Асамат, Вăтеçуч, Синер, Тăвăт, Шерашево, Мăн Вылă, Элекейкино, Пиçенер, Юманлăх, Мăн Тукташ тата ыттисем нумай колхозсем пысăк ĕçсем турĕç. Мăн Тукташ колхозĕн планпа 64 ĕне, 118 сысна, 86 сурăх пулмалла, халь унăн 82 ĕне, 173 сысна тата 98 сурăх пур. Ку колхоз хушса пана плана та ытлашшипех тултарнă.

Юлашки вăхăтра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕрен вуншар стахановецсемпе стахановкăсем ӳссе çитĕнчĕç. Пиçенер колхозĕнчи ĕне фермин заведующийĕ Федор Егоров иртнĕ çулта 15 ама сыснаран 180 çăвăр, кăçал кашни амаран 12,5 çăвăр илнĕ. Тури Хоразан Эренар колхозĕнчи свинаркăсем Х. Дмитриевăпа В. Иванова кăçал кашни ама сыснаран 12 çăвăр ытла илнĕ, пурне те вĕсене лайăх пăхса ӳстерессĕ. Турикасси колхозĕнчи сурăх пăхакан Ольга Михайлова кăçал 18 сурăхран 22 путек илнĕ. Эренар колхозĕнчи чăх-чĕпсене пăхакан 78 сулхи колхозница Лазарева чăхсене лайăх пăхса усраса вĕсен хисепне 307 пуç ситерчĕ. (Планпа 205 пуç пулмалла). Кăçал вăл çĕнĕрен 156 чĕпĕ кăларса 147-шне сыхă усрать.

Ĕçре çакăн пек лайăх тĕслĕхсем кăтартакансем районра сахал мар. Анчах çакна та палăртмалла: лайăх ĕçлекенсемпе пĕрлех пирĕн хушăра япăх ĕçлекенсем, ĕç çине сиелтен пăхакансем те пур-ха. Уйрăм колхозсем, вĕсен руководителĕсем çителĕксĕр ĕçленине пула, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе кайра пыраççĕ. Ильпеш колхозĕ акă нихăш енĕпе те фермăсене комплектласа çитермен. Малтхирлеп, Иляикино, Йӳçкасси колхозĕсем пĕрре те ниепер тĕрлĕ выльăхсем енĕпе плана тултарман.

Çамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе те ситменлĕхсем пур. Çамрăк выльăхсене кирлĕ пек пăхманнипе пула вĕсенчен вилнисем пур. Кăçал çуралнă пăрусем 14,9 процент, сысна çурисем 10,3 процент, путексем 8,8 процентĕ вилнĕ. Ходяки «Çĕнĕ пурнăç», Эренарти «Самолет», Смородинăри «Коминтерн», Янашри «Хĕрлĕ Сормă», Хирлепри Буденный ячĕпе тăракан, Сирĕкасасинчи «Самолет» колхозсенче пăрусемпе путексем 20—35 процент таран вилсе пĕтнĕ те пулчĕ. Çакă вăл выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри чи пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Çакă пире выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçе нумай лайăхлатма кирли çинчен асăрхаттарать. Ку тĕлĕшпе зооветработниксен фермăсене ĕçлекенсене кулен вĕрентсе, пулăшса пымалла. Кашни çамрăк выльăха тĕрĕс-тĕкел, пултаруллă, мăнтăр пăхса ӳстермелле.

ССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн „Лашасен йышне ӳстерессипе вĕсене пăхса усрассине лайăхлатасси çинчен" пулнă постановленийĕ колхозниксене пĕтĕм тăвакан лашасене тата ĕçлеме усă тăвакан лашасене тирпейлĕ усрама хушать. Районти лашасем ĕрчетмелли плана 4,5 процент иртерсе пурнăçланă пулсан, тихасем енĕпе плана 129 процент пурнăçларĕ. Мăн Вылăри «Красная Заря» колхозри старши конюх Л. Иванов кăçал 30 кĕсререн 30 тиха, Вăрманкасри «Труд» колхозри старши конюх З. Евстафьев 26 кĕсререн 26 тиха илчĕç. Чылай колхозсенче лашасем пăхас ĕç лайăхланчĕ. Çурăхи вăхăтра пирĕн лашасем 1400 пуç пулнă пулсан, халĕ 730 пуç. Анчах çакна та çителĕклĕ теме çук-ха, пирĕн кашни лашана мăнтăр тытас, ăна ĕçе юрăхлă тумалла. Уйрăм колхозсенче хальччен кирлĕ пăхассине халĕ те пĕтермен. Иляикинăри «Красноармеец» колхоз членĕ Егоров лашана хĕнесе юрăхсăра кăларнă. Колхоз правленийĕ Егорова халĕ те айăпламан. Ахальтен мар ĕнтĕ ку колхозра лашасем пăхас ĕçре обезличка пĕтмен.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ку таранччен туна ĕçсем вĕсем пуçламĕшĕ çеç-ха. Умра татах та пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Эпир выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана иртерсе тултарнипе пĕрлех, унăн продуктивноçне ӳстерес енĕпе çителĕксĕр ĕçлетпĕр. Малашне çавăн çине ытларах çаварăнса пăхмалла.

Ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркене çирĕп пурнăçласа пыратпăр

(А. Волков—райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ)

Пирĕн район юлашки çулсенче выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тĕлĕшпе чылай лайăх ĕçсем турĕ. Ĕне выльăхсем енĕпе район çулран çул плана тултарса пыраймансКер, кăçал плана 6 уйăх хушшинче иртерсе пурнăçларĕ. 8 уйăх хушшинче выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕ иртнĕ çултинчен 35,8 процент чухлĕ ӳсрĕ. Çавăн пекех эпир иртнĕ çултипе танлаштарсан лашасен хисепне 8 процент, сыснасен хисепне 42,4 процент, сурăхсен хисепне 39,1 процент ӳстертĕмĕр.

Халĕ пирĕн кашни колхозра тенĕ пекех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре палăрнă юлташсем пур. Вĕсем ĕçе лайăх организациленĕ пирки лайăх результатсем кăтартаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсенчен кашниех фронта пулăшас шухăш-кăмăлпа ĕçлет. Ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн, партипе правительство йышăннă постановлени тăрăх, пирĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ. Çак постановлени выльăх-чĕрлĕх пăхнă çĕрте ĕçлекенсене питех те хавхалантарать.

Ходяк колхозĕнчи пăру пăхакан Кульнина юлташ кăçал 8 уйăх хушшинче 23 ĕнерен кашнинченех пĕрер пăру илчĕ, çавăншăн ăна ĕçкунĕсемсĕр пуçне, 69 литр сĕт параççĕ. Мăн Вылă колхозĕнчи старши конюха Иванов юлташа 30 кĕсререн 30 тиха илнĕшĕн 750 тенкĕ укçан тӳлеççĕ. Вутлан колхозĕнчи сурăхсем пăхакан Т. Игнатьева юлташ та кашни сурăхран пĕрер путек ытла илнĕ. Çавăншăн ăна, ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх, 2 сурăх тирĕ тата пĕр килограмм çурă çăм параççĕ. Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхозри свинарка Д. Золотова кăçал хăйне çирĕплетсе панă 16 ама сыснаран 208 çăвăр илсе пурне те гĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтерет. Çавăншăн Золотова юлташа закон тăрăх 4 çăвăр параççĕ. Сормпуç Могейри доярка Матвеева юлташ, 8 уйăх хушшинче кашни ĕнерен 1185 литр сĕт суса илнĕскер, ĕçшĕн хушса тӳлемелли закон тăрăх 170 литр сĕт илет.

Районĕпе илсен, малтанлăха шутланă тăрăх, ĕçре лайăх результатсем кăтартнăшăн ĕçшĕн хушса тӳлемелли законпа конюхсенчен 12 çынна, дояркăсенчен 37 çынна свинаркăсенчен 18 çынна тата сурăхсене пăхакансенчен 43 çынна ĕçшĕн хушса тӳлемелле пулать.

Паллах, тăрăшса ĕçлесен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсенчен кашнинех ĕçшĕн хушса тӳлемелли законра кăтартнă пек тӳлеме пултараççĕ. Анчах чылай çĕрте çав закона тĕплĕн ăнлантарса паман. Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн пĕтĕм районĕпе илсен, продуктивность енĕпе план тулса пыраймасть. Ку тĕлĕшпе малашне пирĕн ытларах та тимлĕнрех ĕçлес пулать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекен кашни çыннăн хăйне çирĕплетсе панă выльăхран планра кăтартнă чухлĕ çеç мар, унтан чылай ытларах çăварсем, ытларах сĕт, çăм илме тăрăшмалла.

Выльăхсен продуктивноçне ӳстерес пулсан, вĕсене лайăх пăхмалла — ăшă та таса çурт-йĕрсенче тытмалла, вăхăтра апат парса шăвармалла, айĕсене тасатса тăмалла. Халĕ уйрăмах хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлес пулать. Ĕçе ырана хăвармалла мар, çитес кунсенчех витесемпе сарайсене юсаса йĕркелемелле, çителĕклĕ апат хатĕрлесе хумалла. Силос хывмалли плана эпир ытлашшипех тултарнă, анчах вăл çителĕксĕр, ку ĕçе малалла та туса пымалла.

Ĕçе юратни кирлĕ

(Ф. Егоров—Пиçенерти „IX с"езд ВЛКСМ" колхоз фермин заведующийĕ)

Кирек мĕнле ĕçе тăвас пулсан та, ăна юратни кирлĕ. Хăвăн ĕçне юрататăн пулсан ĕç ăнăçлă пулать, вăл пысăк усă парать.

Эпĕ хамăн ĕçе юрататăп. 1941 çулта эпĕ конюхра ĕçлерĕм. Лашасене лайăх пăхнăшăн мана преми пачĕç. Иртнĕ çулти январьте мана сысна фермине куçарчĕç. Çак вăхăтра пирĕн фермăра сыснасем чирлесе кайнăччĕ. Мĕн пирки? Сысна пăхакансем сыснасене шăннă çĕрулми, тата ăна та пĕçермесĕрех çитернĕ иккен. Ку юраманнине эпĕ тахçанах пĕлетĕп, вара хăвăртрах сыснасене урăх апат çине куçартăм, çĕрулмине пĕçерсе тӳсе пама тытăнтăмăр. Çапла майпа сыснасем пирĕн чылаях юсанчĕç. Иртнĕ çулта вара эпир 12 ама сыснаран 180 çăвăр илтĕмĕр, вĕсем те лайăх çитĕнчĕç, 80 çăвăрне колхозниксене валеççе патăмăр.

Хальхи вăхăтра пирĕн колхозăн 4 ферма, вĕсене комплектласа çитернĕ. Выльăхсем валли кирлĕ пек услови туса панă, хĕл каçмалăх апат хатĕрленĕ. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăна колхоз ытлашшипех пурнăçларĕ. Халĕ эпир тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен сывлăхне сыхламалли фонда аш-какай, сĕт-çу, пама тытăнтăмăр.

Района ВКП(б) Обкомĕпе ЧАССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне пани пире ĕçре татах та хавхалантарать. Малашне эпир ытларах вăй хурса ĕçлеме пулатпăр.

Пыл хурчĕ пысăк тупăш парать

(И. Петриков—Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхозри хурт-хăмăр пăхаканĕ)

Пыл хурчĕ пысăк тупăш панине пурте аван пĕлеççĕ. Ахальтен мар юлашки çулсенче пирĕн районри колхозсем хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçе тытăнчĕç.

Анчах калас пулать, хурт-хăмăр та пăхмасан нимĕнле тупăш та памасть. Çавăнпа пыл хурчĕсене пăхас ĕçе лайăх йĕркелемелле, унта вăл ĕçе юратакан çынсене лартмалла.

Эпĕ пчеловод пулса чылайранпа ĕçлетĕп, хам ĕçе юрататăп. Çавăнпа манăн хуртсем яланах тĕрĕс-тĕкĕл пурăнаççĕ, пыл нумай параççĕ. Кăçал акă эпир 90 çемьерен кашнинченех 34-шар килограмм пыл илтĕмĕр. Ку вăл пире колхозниксене пама та, ирĕке сутма та çитет. Колхоз çулсерен пыл хуртĕнчен темиçе пиншер тенкĕ тупăш илет. Кунсăр пуçне, кашни хурт çемьинчен планран иртерсе пыл илнĕшĕн мана хама та ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ. Кăçал акă эпĕ 18 килограмм пыл илетĕп.

Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç пирĕн аталансах пырать. Малтанхи вăхăтра пирĕн 33 çемье кăна пулнă, кăçал вара 125 çемьене çитрĕ. Вĕсем валли хĕл каçма лайăх омшаниксем туса панă тата фураж çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Пыл хурчĕ, выльăх-чĕрлĕх пекех, лайăх пăхсан пысăк тупăш парать. Ăна кашни колхозăн усрама тăрăшмалла.

Ирĕке кăларнă районсене пулăшма

Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшас тесе Элĕк районĕнчи Элекейка, Кайри Хирлеп колхозĕсем вĕсем валли пĕр сысна, пĕр сурăх уйăрса хунă. Синер, Эренар колхозĕсем икĕ сысна уйăрса хунă.

Ют çĕршывсенче

ГРЕЦИ ОККУПАНТСЕНЕ ПАРАНМАН: Укерчĕк çинче: Греци «Ламброс Кацоние» ятлă подводнăй лодки, союзниксем майлă вăрçакан-скер, тăшманпа çапăçма кайма хатĕрленет. Çак хушăра вăл тăшманăн икĕ карапне путарнă.

Черчилльпе Рузвельт Итали халăхне чĕнсе калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельтпа Черчилль Итали халăхне тата Бадольо маршала чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Çав чĕнӳре çапла каланă: сирĕн çĕршывшăн асаплă пулса тăракан тапхăрта сирĕн Итали халăхĕ валли мирпе ирĕклĕх тата Итали валли Европăри цивилизацилĕ çĕршывсем хушшинче хисеплĕ вырăн кĕрешсе илмешкĕн пуçламĕш татăклă утăмсем тумалла. Эсир хăвăр çĕршывăра фашистла чуралăхран ирĕке кăлартăр. Тата тепĕр пысăкрах задачăна пурнăçласси—Итали çĕрне нимĕç захватчикĕсенчен тасатасси кăна юлать.

«Халĕ ĕнтĕ,—тенĕ малалла чĕнӳре, — кашни итальянецшăн татăклăн пырса çапмалли вăхăт çитрĕ. Хĕвеланăçĕнчи тĕнчен çарĕсем сире пулăшма пыраççĕ. Пирĕн вăйсем çав тери пысăк, эпир Италие пĕр харăсах темиçе çĕртен пырса кĕме пултаратпăр. Нимĕçсен Италири террорĕ нумай вăхăта пыраймĕ. Сирĕн çĕршыври террора тăпăлтарса кăларăпăр, эсир çак ирĕке кăларакан аслă кĕрешӳре пулăшса пырса, хăвăр çĕршывăн шанчăклă та тĕрĕс тусĕсен хушшине тăрăр, вĕсенчен сире тивĕççĕр уйăрнă».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Таранторан çурçĕр еннерехри районра Англи çарĕсем вырăнти укрепленисене анлăлатса пыраççĕ. Нимĕçсен вăйсăр чаçĕсем каялла чакаççĕ. Англичансен 8-мĕш армийĕ хăвăргтăн малалла куçса пырать. Салерно патĕнчи 5-мĕш арми çапăçакан районра малтанхи пекех йывăр çапăçусем пыраççĕ. Германи позицийĕсене татса тухма татăклăн тапăнса пыракан союзниксен войскисене хирĕç нимĕçсем хаяррăн хирĕç тăраççĕ.

Союзниксен çарĕсем Кротоне портне тытса илнĕ.

ИТАЛИ КАРАПĔСЕМ МАЙОРКА УТРАВĔ ÇИНЧИ ПОРТА ПЫНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Майорка утравĕ çинчи Пальма портне Итали флочĕн 12 карапĕ пынă.

Мальтăна Италин 6 карапĕ пынă

ЛОНДОН, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Мальтăна Италин тата 6 карапĕ пынă.

ИТАЛИН ПУКАНЕЛЛЕ «ПРАВИТЕЛЬСТВИ»

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Германири радио «Италин нацилле фашистла правительствине» туни çинчен пĕлтернĕ. Берлинри радио çав пуканелле «правительствăна» кам-кам кĕни çинчен пĕр сăмах та шарламасть, вăл çак правительство «Муссолини ячĕпе ĕçлĕ» тесе çеç калать. Правительство ăçта пурăнса ĕçленине те кăтартман.

ГЕРМАНИ ÇАРĔСЕМ АЛБАНИЕ ПЫРСА КĔНИ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Германин гитлерла информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: Германи çарĕсем Албание пырса кĕнĕ, вĕсем портлă хуласене—Валонăна, Дураццона, Рагузона, çавăн пекех тата Элбасан хулине тытса илнĕ. Адриатика тинĕс хĕрринче пулнă Итали çарĕсем парăннă.

ИТАЛИЯ ПАРАННĂ МАЙ БУХАРЕСТРА ТАТА БУДАПЕШТРА ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇЛЕ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухса тăракан «Нюа даглигт аллеханда» хаçат çапла пĕлтерет: Италия парăнни çинчен пĕлтерсенех Бухарестра Германие хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ, демонстрацисенче юлашкинчен халăхпа полици хушшинче тытăçусем пулнă.

Çав хаçатах тата çапла пĕлтерет. Италия парăннă кун Будапештра та демонстрацисем пулса иртнĕ.

ЧАН КАЙ-ШИНЕ КИТАЙĂН НАЦИЛЛĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ПРЕЗИДЕНЧĔ ВЫРĂННЕ СУЙЛАНĂ

ЧУНЦИН, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Китайăн нациллĕ правительствин президенчĕ вырăнне Чан Кай-шине суйланă.

Пĕлтерӳ

Паян, сентябрĕн 15-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) Сталин юлташăн кĕнекине вĕренекенсене пулăшас тĕлĕшпе лекци пулать. Лекци теми çакăн пек: **„Нимĕçсен вăрă хурахла империализмĕ—Совет Союзĕн чи усал та чи ултавлă тăшманĕ".**

Лекцие ВКП(б) горкомĕн лекторĕ Давтян юлташ вулать.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарăн Атăл лешьенчи электростанцийĕнче яланлăха ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: теплосиловой цех пуçлăхĕ, электричество цехĕн пуçлăхĕ, топливăпа транспорт цехĕн пуçлăхĕ, инженер-теплотехниксем, инженер-электриксем, дежурнăй электротехниксем, электромонтерсем, пăс турбинисен машинисчĕсем, конденсаци тĕлĕшпе ĕçлекен машинистсем, компрессорпа ĕçлекен машинистсем, насоссемпе ĕçлекен машинистсем, кочегарсем, шыв пăхакансем, тĕтĕм сăтакан трубасене пăхакансем, кĕл тасатакансем, мотористсем, скреперщиксем, грузчиксем, çав çӳлте асăннă специальноçсене ĕçре вĕренес текен арçын е хĕрарăм рабочисем.

Ĕçе кĕрекенсем валли хваттерсем пур, çимелли параççĕ тата пурнăçра кирлĕ ытти енсемпе те пулăшу параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, поселок Сосновка, отдел кадров Электростанции.

3—1

Торгăн Шупашкарти отделенийĕ

1942 çулта пахча-çимĕçсем илнĕ организацисемпе учрежденисене пичке-каткасене Торг склачĕсене таварса паман организацисемпе учрежденисене кăçалхи пахча-çимĕçсене пама май пулмасть, тесе пĕлтерет.

Торг директорĕ.

Завода çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: товаровед (сутас тĕлĕшпе), машинистка-секретарьсем, шутпа контора работникĕсем, кладовщиксем.

Çавăн пекех тата çакăн пек рабочисем кирлĕ: токарьсем, фрезеровщиксем, револьверщиксем, слесарьсем, гальваниксем, волочильщиксем, штамповщиксем, строительствăра ĕçлеме пĕлекен рабочисем, грузчиксем, возчиксем, прачкăсем, подсобнăй рабочисем тата уборщицăсем.

Вахтерсем (охранниксем) кирлĕ, арçынсене те, хĕрарăмсене те йышăнаççĕ. Хваттер общежитире. Спецодежда параççĕ.

Çавăн пекех тата тĕрлĕрен специальноçсем тăрăх переквалификантсене йышăнаççĕ (15 çула çитнĕ е унтан иртнĕ ученикĕсене).

11 сехетрен пуçласа 15 сехете çитиччен ыйтса пĕлме пулать. Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80, Бюро пропусков.

Çыхăну Халăх Комиссариачĕн Чăваш управленине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: административнăй тата хуçалăх ушкăнĕн начальникĕ, транспорт инспекторĕ, икĕ экономист, машинистка.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом Связи, 3 этаж, комната 14, отдел кадров.

РАЙКОМОЛТАН ÇУР ÇУХРĂМРА

ÇЕМЕРЛЕ. «Труженик» заводри комсомолецсем иртнĕ çулсенчи кунсене аса илсен хăйсем те тĕлĕнеççĕ. Кунта сăмах комсомол организацин ĕçĕсем лайăхланни çинчен мар, япăхни çинчен пырать. Виçĕ уйăх каярах комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕ Васильева юлташ Сталинграда ĕçлеме кайсан, ун вырăнне А. Семенова юлташа суйланă. Вăл комсомолецсем шанса панă ĕçе кирлĕ пек туса пыма шутламарĕ. Пухулĕ пек туса пыма шутламарĕ. Пухусене «ырана» кăварса пыма тытăнчĕ, комсомолецсене общественлă ĕçе явăçтарасси çинчен манчĕ. Юлашкинчен ĕçрен пăрахса кайрĕ. Çапла вара комсомол организаци секретарьсĕр тăрса юлчĕ. Халĕ ĕнтĕ организаци хут çинче çеç шутланать. Комсомолецсем хушшинче дисциплина япăх. Вĕсем производствăра ытти çамрăксенчен нихăш енчен те уйăрăлса тăмаççĕ.

Производствăра стахановла ĕçлекен çамрăксем Зубрилина, Семенова, Кальянов, Ерофеева, Кайзышев, Киселев тата ытти юлташсем ленинла-сталинла комсомол ретне кĕресшĕн. Анчах вĕсемпе никам та ĕçлемест, кăçал пĕр пуху та, калаçу та иртермен.

ВЛКСМ райкомĕ çак заводри пуçламĕш организаци япăххи çинчен тата халь вăл секретарьсĕр тăрса юлни çинчен те пĕлет. Анчах та вăл унăн ĕçне лайăхлатассишĕн тăрăшмасть. «Труженик» завод райкомолтан çур çухрăмра кăна пулин те унта кăçал райкомол секретарĕсенчен пĕри те пулман.

«Труженик» заводра халь 4 комсомолец çеç, вĕсенчен 3-шне кăçал илнĕ. Камăн пулăшмалла-ха çак организацине, ВЛКСМ райком работникĕсем пулмасан? **Х. ЛИСИН.**

Тутар республики—Орела пулăшма

Тутар республикинчи ĕççыннисем Орел хулипе облаçне ура çине тăратас ĕçе активлăн хутшăнма йышăннă.

Кошелков юлташ партком секретарĕн заместителĕ пулса тăракан завод коллективĕ икĕ кун ĕçлесе илнĕ укçапа Орел хулинчи ĕççыннисем валли килте кирлĕ япаласем илме йышăннă.

Чистополь хулинчи ĕççыннисем Орел хулине яма сĕтел-пукансем нумай пухнă тата 450 мăшăр ача атă-пушмакĕ, 500 килограмм супăнь пухнă. (ТАСС).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 235 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.